**Пирĕн календарь**

# Вăл — Октябрь тантăшĕ

**Çĕрĕм-шывăм, ӳсен, çĕкленен,**
**Халăха тулăх пурнăç пиллен.**
**Эс утатăн Ильич çулĕпе,**
**Тăван парти ертсе пынипе...**

Çак мăнаçлăн та хăватлăн янăракан юрра 1976 çулта республикăра ирттернĕ ĕçпе юрă уявĕнче пĕрлештернĕ хор юрланăччĕ. Унăн авторĕ — чăвашсен паллă поэчĕ, РСФСР тата Чăваш АССР культура тава тивĕçлĕ работникĕ Василий Иванович Давыдов-Анатри.

Поэта пирĕн республикăра лайăх пĕлеççĕ. Вăл 45 çул ытла ĕнтĕ чăваш культуринче вăй хурать. В. Давыдов-Анатри — пурнăçпа тан пыракан поэт-юрăçă, ун кашни сăвви-юрринчех — паянхи кун таппи. Вăл Тăван çĕршыв-аннемĕре, Коммунистсен партине, совет халăхĕн ĕçне-хĕлне, халăхсем хушшинчи туслăха, çамрăксен паттăрлăхĕпе ĕçченлĕхне витĕмлĕн сăнласа кăтартать.

«...Куç умĕнче Пăла йăлтăртатса выртать. Унăн сулахай сыранĕнче Аслă Арапуç мăнаçлăн сарăлса ларать.

Эпĕ çак ялта 1917 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр именмесĕрех çапла калама пултаратăп: эпĕ — Октябрь тантăшĕ.

Çуралнă тăван ялăм вара питех те илемлĕ вырнаçнă темелле. Унăн икĕ вĕçĕнче те пĕчĕк вăрмансем. Пĕрне Малти, теприне Кайри Хырай теççĕ. Ялтан инçех мар Шурут тăвĕ пур. Вăл тĕрлĕ çăлпа, ӳсентăранпа, улма-çырлапа пуян. Пирĕнтен инçех мар Сăр вăрманĕ пуçланса каять. Вăл Чăваш çĕршывĕн илемĕ, мухтавĕ».

Çапла çырать поэт çуралнă кĕтесĕ çинчен «Сатин кĕпе» ятлă повеçĕнче.

Хресчен çыннин ĕçĕ-хĕлĕ мĕн пĕчĕкрен пулас поэт куçĕ умĕнче пулса иртнĕ. Чăваш халăхĕн ĕмĕртен пыракан çурхи вăййисем, туйĕ-çуйĕ, улахĕсем, Аслă Октябрь хыççăн çуралнă çĕнĕ уявсем, акатуйсем ĕмĕрлĕхех поэт асĕнче юлаççĕ. Вĕсенчи сăнарсем каярахпа унăн юррисене кĕреççĕ.

— Эпĕ Герман Степанович Лебедев композитора хамăн ĕçри çывăх тусăмсенчен пĕри тесе шутлаттăм. Нумай ĕçлерĕмĕр пĕрле, — каласа парать поэт. — Герман Степанович кĕвĕленĕ «Ĕç геройĕсене салам», «Эпир миршĕн», «Тальянка», «Тăван ялăм», «Маттур çынсем салапайсем», «Хуткупăса тытсассăн», «Колхоз лаши хура тур», «Сад янăрать» тата ытти юрăсем хор коллективĕсен тата художество пултарулăх участникĕсен репертуарне çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç. Нумай çул каялла эпĕ Куславкка районĕнчи хăмлаçăсем патĕнче пулнăччĕ. Унта республикăри паллă хăмлаçăпа, ĕç геройĕпе Павел Григорьевич Жарковпа паллашнăччĕ. Çак сăпай та ĕçчен çын мана хăй пурнăçĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ, хăмла тухăçне мĕнле ӳстерсе пыни çинчен каласа пачĕ. Ку паллашу «Эпир — маттур хăмлаçăсем» ятлă сăвă çырма хавхалантарчĕ. Сăвă Герман Степанович кăмăлне кайрĕ пулас. Нумай та вăхăт иртмерĕ, вăл ун кĕввине çырса та хучĕ. Юрă Аслă Октябрь 50 çул тултарнă ятпа республикăра ирттернĕ конкурсра премии илме тивĕç пулчĕ.

Василий Давыдов-Анатри чăваш композиторĕсемпе пĕрле пысăк калăплă произведенисем çырас ĕçе те хутшăнать. Вăл Анисим Асламасăн «Евчĕ» ятлă музыкăллă комедийĕ валли ятарласа юрăсемпе арисен сăввисене çырнă. Темиçе çул каялла Федор Васильев композиторпа пĕрле вĕсем «Чемен» опера çырса пĕтерчĕç. Часах ăна музыка театрĕн сцени çинче те курма пулĕ.

Поэт уйрăмах Филипп Лукин композиторпа тачă çыхăну тытать. Вĕсем иккĕшĕ çырнă юрăсен шучĕ Чăвашрадио фонотекинче анчах аллăран иртет.

— Тӳрех калатăп: Филипп Мироновичпа алла-аллăн ĕçлесси маншăн пысăк чыс, — каласа парать Василий Иванович. — Ăна эпир хамăр хушăмăрта хисеплесе «юрă королĕ» тесе те калатпăр. «Чечекленет Чăваш çĕршывĕ» юрă мĕнле çуралнине астăватăп. Пĕррехинче Филипп Миронович манпа чăваш çĕршывне халалласа юрă çырма кирли çинчен сăмах хускатрĕ. «Вăл хамăр республика Октябрь тивлечĕпе ӳссе, çĕнелсе пынине, чăваш халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе тăванла пурăннине кăтартса памалла», — терĕ композитор. Чылай вăхăт ĕçлерĕмĕр. Тăрăшни сая каймарĕ: юрра халăх кăмăлласа йышăнчĕ.

«Тăван парти ертсе пынипе», «Ленин», «Россия, сан çинчен юрлатăп», «Мирпе туслăх юрри», «Юрлать колхозлă ял», «Пирĕн председатель», «Тăван хула», «Мухтав сире, çĕр ăстисем» — çаксене пурне те Филипп Лукин Василий Давыдов-Анатри сăввисемпе кĕвĕленĕ.

Ĕмĕр тăршшĕпех поэт нумай композиторпа çыхăну тытнă. Вĕсен шутĕнче — Василий Воробьев, Анатолий Тогаев, Григорий Хирбю, Аверий Токарев, Аристарх Орлов-Шуçăм, Виктор Ходяшев. Хăй теллĕн вĕреннĕ композиторсем те В. Давыдов-Анатри сăввисемпе сахал мар юрă хывреç. Константин Архипов («Сарпике»), *Гаврил* Митрофанов («Эс мана юратсан»), Аврам Бурундуков («Патăрьел каччисем-хĕрĕсем»), Геннадий Маркиянов («Савнă тусăм, эс тухсам»), Александр Сергеев («Колхоз лаши хура тур»), Юрий Кудаков («Тăван пире кĕтсе тăрать») юррисем халăх хушшинче анлăн сарăлчĕç.

В. Давыдов-Анатри — çĕнĕ самана, хĕрӳ пурнăç юрăçи. Вăл хăйĕн пĕтĕм ĕçне-хĕлне Тăван çĕршывпа, тăван республикăпа çыхăнтарнă. Ăна яланах рабочисем, ял ĕçченĕсем, вĕренекенсем хушшинче курма пулать. Вăл пурнăçа юратма вĕрентекен юрри-сăввисемпе вулакансене хавхалантарать, çĕнĕ ситĕнсем патне паттăррăн утма чĕнет. Поэт хăйĕн чун-хавалне ĕçри тусне Герман Лебедев композитора халалланă сăввинче уçса парать:

**Пире атте-анне çуратнă**
**Ĕçчен пулмашкăн ачаран.**
**Çĕршыв чĕнсен — эпир çунатлă**
**Вĕçме планетăсем таран.**
**Пире атте-анне çуратнă**
**Юрра хăват, çунат пама.**

**Иван АХРАТ.**